Лайăх çынсем çинчен

# Малашлăха пĕрле пăхатпăр



Хаçат ĕçĕпе район тăрăх çӳренĕ май тĕрлĕ çынсене тĕл пулма тивет. Кашнин хăйĕн интересĕ, хăйĕн курăмĕ, хăйĕн тĕллевĕпе ĕçĕ-хĕлĕ. Ĕçлекен çынна пĕрне мухтаса тепĕрне тиркеме çук.

Йӳçкасси тăрăхĕ те паллă çынсемпе, хăйсен ĕçне чунĕпе парăннисемпе чухăн мар. Вĕсенчен пĕрин тăрăшулăхĕнчен, вăл хăйĕнпе пĕрле ĕçлекенсемпе пĕр сăмах тупма пĕлнинчен, йывăрлăхсене тарăна ямасăрах сирме пултарнинчен иртнĕ çулсенче пĕрре мар тĕлĕннĕ, паян та тĕлĕнетĕп, малашне те ырăпа тĕлĕнме пăрахас марччĕ. Манăн сăмахăм "Ударник" сăнавлă производство хуçалăхĕн Вăрманкасри производство участокĕн ертӳçи Геннадий Никонович Афанасьев пирки.

Ялти шкулта пуçламăш классене вĕрентекен Нина Петровнапа чунĕпе çĕр ĕçне парăннă Никон Афанасьевич Афанасьевсем тăватă ача çуратса ӳстернĕ. Икĕ аппăшĕпе йăмăкĕ аслă пĕлӳ илсе пурнăç çулĕ çине тухнă пулсан, Гена ачаллах ĕç пурнăç тыткăчи тенине тĕпе хурса ĕç çывăхнерех тăнă.

– Анне хăй вăхăтĕнче хиртен улăм илсе кĕме трактор-машинăшăн куççуль юхтарни манăн пурнăçăн хăйне евĕр йĕрне турĕ, ăшра водитель е тракторист пулас ĕмĕте çуратрĕ. Çапла вара Совет Çарĕнче службăра пулса таврăннă хыççăн тăван совхозра водитель ĕçне кӳлĕнтĕм, – аса илет паян Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотине тивĕçнĕ Г.Афанасьев хăй вăхăтĕнче юратнă ĕçре "Чи лайăх водитель" ята та илнине палăртса.

Тăрăшуллă ĕçчене ертӳçĕсем те асăрхаççĕ. 1991 çулхи хĕл кунĕсенче хастар водителе Вăрманкасси уйрăмне ертсе пыма шанаççĕ. Унтанпа 15 çул хыçа юлчĕ пулин те, çак вăхăтра асăннă уйрăма хуçалăхра та, районта та япăххипе асăнман. Пачах урăхла, вĕсем ыттисемшĕн нумай чух тĕслĕх пулса тăнă.

– Сирĕн уйрăмра çулленех ĕçсем кал-кал çыхăнса пынине эсир мĕнле ăнлантаратăр? – ыйтатăп 50 çул тултаракан çĕр ĕçченĕнчен.

– Кунта, ман шутпа, вăрттăнлăхăн хуравĕ питех те ансат: специалистăн вырăнта пулмалла, халăхпа пĕр урапа çинче пыма тăрăшмалла. Эпĕ атте-аннеренех çакна чуна хывса ӳснĕ, çапла тăватăп та, уссине те куратăп. Çу кунĕсенче кашни водитель-механизатор ăçта, хăçан, мĕн ĕçленине учета илсе пыратăп. Ĕçлеменнисене, кахал-наянсене вăрçатăп, пĕрле ларса ĕçетĕп-çиетĕп, мирлешетĕп те малашлăха та вĕсемпе пĕрле пăхатăп, – кăмăллăн калаçать Геннадий Никонович.

– Халăхпа ĕçлеме хăш çулсенче йывăртарах пулчĕ? – ыйтатăп малалла.

– Халăхпа пĕр чĕлхе тупса ĕçлеме мехел çитернĕрен йывăринех курмарăм-ха. Çĕр ĕçĕнче, паллах, ахлатмалла йывăрлăх та пулать, çапах парăнтарса. Ĕçе туллин алла илме хуçалăх директорĕ Платон Павлович Давыдов ăс парса пыни, тĕп агрономра нумай ĕçленĕ Иван Тихонович Тихоновпа Николай Николаевич Николаев тĕп инженер вăхăтра ĕçлĕ сĕнӳсем пани нумай пулăшрĕç тата хавхалантарчĕç, – пулчĕ Г. Афанасьев хуравĕ.

Геннадий Никонович хăйĕн уйрăмĕнче ĕçлекен кашни ĕçченпе, хуçалăх ертӳçипе тата специалистсемпе пĕр чĕлхе тупма пултарни уйрăма шанчăклăн малалла аталантарма пулăшнă. Çапла вара юлашки 15 çулта кунта çĕнĕ мастерской, тырă хумалли арккăллă икĕ склад, вăрлăх хумалли икĕ склад, 200 ене вырнаçмалăх сарай, сысна ферминче икĕ сарай хута кайнă. Кашни çĕртех канмалли тата ĕç условийĕсем лайăххисен шутĕнче.

Ĕçлесен – пулать. Çакна çирĕплетет Геннадий Никоновичăн ĕç ĕмĕрĕ.

**А. ПЕТРОВ.**

Вулакан сĕнет

# Малта пыракансем патĕнче вĕрентмелле

Эпĕ хам ĕмĕрте 30 çул ытла пуçлăхра ĕçлерĕм. Çав шутран 24 çулне Суворов яч. хис. хуçалăха ертсе пытăм: начар колхоза малтисен ретне кăларса хăвартăм. Çакна тума мана Тăван çĕршыва тата хамăр тăрăхри халăха юратни вăй парса пычĕ. Вăл вăхăтра ĕне-сысна фермисенче ĕçлекенсем колхоз председателĕнчен те пысăкрах ĕç укçи илни, ĕç укçине пăхса вĕсем çулталăкне 4-5-шер тонна укçа тӳлемесĕр тырăна тивĕçни, ĕç укçине колхоз кассирĕ ĕçлекенсем патне хире е фермăна тухса пани ĕçлекенсене ӳсĕм çулĕпе шанчăклă утма хавхалантарса пыратчĕ. Паян манăн çавăн чухнехи опыта пĕрлештерсе, вĕсенчен тĕшшине илсе ял хуçалăхне çĕнĕ условисенче аталантарма çакнашкал сĕнӳсем парас килет (вĕсем хуçалăхсенче çывхаракан отчетпа суйлав пухăвĕсемшĕн те меллĕ пулмалла):

1) Районта 24 хуçалăх шутланать. Вĕсенчен 7-шĕ вăйлăраххисем. Тĕслĕхрен, "Свобода" хуçалăх. Кунта районти вĕрентӳ комбиначĕ уçмалла. Унта опытлă ертӳçĕсене явăçтарса çамрăк ертӳçĕсене 10-шар кун та пулин вĕрентмелле. Кунта прокурор сăмахĕ те халĕ çеç ĕçе кӳлĕнекенсемшĕн вырăнлă пулмалла;

2) Агроном-бригадирсен те пĕр условирех кӳршĕсем епле майпа ăнăçлă тырă-пулă туса илнине алла кăранташ тытса шутламалла;

3) Зоотехниксемпе ферма ертӳçисен ăратлăхпа, çĕнĕ технологисемпе ĕçлесе тăкак çулĕнчен пăрăнма ăс пухмалла;

4) Механизаторсен кадрĕсене хатĕрлессине мала хумалла. Паянхиллех пурăнсан тепĕр 10 çултан ялта пĕр тракторист та юлмĕ. Уй-хирсене наука вĕрентнĕ пек сухаласси, агротехникăпа килĕшӳллĕ акасси пысăк ыйту пулса тăрĕ. "Свобода" хуçалăхра 3-шер уйăхлăх механизаторсен курсне уçсан ку ларуран çăлăнса тухма пулĕ, ялсенче ăста механизаторсем сыхланса юлĕç.

Районти ял хуçалăх управленийĕ çак ыйтăва пуçарсан, "Свобода" хуçалăхăн çĕр ĕçне чунĕпе парăннă ертӳçи Кронид Ефимович Сретинский айккинче тăрса юлмасса шанатăп.

**Сĕнӳсене параканĕ Турай ялĕнчи Василий Павлович ПАВЛОВ.**

Ыран – Раççейри воин-интернационалистсен астăвăм кунĕ

# Вут-çулăм витĕр тухнă çамрăклăх

**Кулленхи пурнăçра халăхăмăр ăслăлăхĕ те аталанса пырать, вăл çĕнĕ ӳсĕме тухать, пурнăç çине çĕнĕлле пăхма вĕрентет. Кунта манăн хамăн тĕп сăмахăмсене пуçличчен пĕр чăнлăх çинче чарăнса тăрас килет. Кун-çулпа ăнакăна айккалла сирсе хăвармасăр, йывăрлăхсене куçран пăхса пурнăç утăмĕпе тан пыракансем чĕрене хытарса куççуль витĕр каланинчен: "Паян сана питех те лайăх пулĕ, анчах хăвăнпа юнашар тулли куççуллĕ çынсем тăма пултараççĕ. Ан ман вĕсем пирки самантлăха та".**



Вырăс салтакĕ черетлĕ операцие яланах хатĕр.

... Вут-çулăм. Пĕчĕк кăвайт-и вăл е инçете-инçете курăнакан çапăçу хирĕн çути, анчах ку инкек кирек камăн чĕрине те вырăнтан хускатать. Çурлатри ялĕнче 1964 çулхи ăшă çу кунĕнче çут тĕнчене килнĕ Валера 18 çул тултарсан вăрçă вутне активме тивессе кам шутланăши? Ашшĕ-амăшĕн çулсем иртсен хăйсен пепкин алла пăшал тытса çĕршыв интересĕсене хӳтĕлеме тăма тивесси пирки шухăш пулнă-ши? Икĕ ыйту та "çук" хурав илни пирки иккĕленӳ çук.

Тăватă ачаллă çемьере хăй асли пулнăран Валера Максимовăн ачаллах ĕçе çывăх ӳсме тивнĕ: Е.Андреев яч. хис. хуçалăхăн уй-хир бригадинче ашшĕпе пĕрле акана хутшăннă, утă çулнă, çум çумланă, улăм пуçтарнă т. ыт. те. Çак ĕçсенче вăл пĕр шăллĕпе икĕ йăмăкĕшĕн тĕслĕх пулса тăнă. Аннерен пахи çук теççĕ те, икĕ ывăлпа икĕ хĕр ачалăх çулĕсенчех амăшне пулăшассине мала хураççĕ. Кунта та тĕп ответлăх Валера çине тиенет. 1966 çултанпа 1998 çулччен районти çыхăну уйрăмĕнче почтальонкăра ĕçленĕ Римма Артемьевнана ывăлĕсемпе хĕрĕсем ачалăхра Çурлатри, Малиновка, Муркаш Шаптак ялĕсене хаçат-журнал, çырусемпе телеграммăсем валеçме сахал пулăшнă-и?

– Виçĕ яла почта валеçме аннене йывăр пулнине ăнланаттăмăр та май çитнĕ таран пулăшма тăрăшаттăмăр. Çак тĕллевпе хуçалăхсем урлă хаçат çырăнтарнăшăн аннене кашни экземпляршăн квитанцисем çырма пулăшаттăмăр. Ăна çемйипех çырни те пĕрре мар пулса. Çĕрĕпе çыраттăмăр. Пĕри ывăнатчĕ те, ĕçе тепри малалла тăсатчĕ. "Коммунизм ялавĕ", "Советская Чувашия", "Труд" хаçатсемпе "Капкăн", "Тăван Атăл" журналсене килĕрен тенĕ пек çырăнатчĕç пулсан та, районта тухакан "Çĕнтерӳ ялавĕ" тĕп вырăнтаччĕ. Ватă çынсем ытти хаçат-журналсене çырăнмасан та, район хаçатне пур-пĕрех çырăнатчĕç. Эрнере виççĕ тухатчĕ вăл. Ял çыннисене хăйсене кирлĕ хыпарпа тивĕçтеретчĕ. Çулла велосипедпа пулсан, хĕлле шкултан таврăнсанах йĕлтĕр çине тăраттăмччĕ те çурăм çине почта сумкки çакса виçĕ çухрăмри Малиновка ялне хаçат-журнал валеçме тухса каяттăм, – тет ачалăхри правурлăха кăтартса паян та ĕçре çын хыçне юлман Валерий Геннадьевич Максимов.

Валерăн асĕнчех-ха ял çыннисемпе тăванĕсем ялти каччăсенчен пуринчен малтан çарта Афганистан Республикине лекнĕ Вячеслав Михайлович Пугачева епле кĕтни. "Çыру пур-и?" – ыйтатчĕç вĕсем амăшне пулăшма тухнă урампа иртсе пыракан 16 çулхи каччăран. Çулталăк тăсăлчĕ çакнашкал лару-тăру. 1981 çулхи çуркунне, Славăпа пĕр çул çара кайнă тантăшĕсем киле таврăнма пуçласан, çыру хакĕ татах ӳсрĕ. Валера шкул пĕтерсен тин çамрăклах вăрçă вутне активсе пăхма тивнĕ Слава çартан таврăнчĕ. Тус-тантăшĕсемпе тăванĕсен савăнăçĕ паян та Валерий Геннадьевич асĕнче. Шутланă-и-ха ун чух 17 çулхи çамрăк хăйне те çав вут-çулăм витĕр тухма тивессе? Çук.

Шăпа пӳрни, тет чăваш, пурнăç кăларса тăратнă йывăрлăхсемпе килĕшсе. Валерăн та 1982 çулхи кĕркунне те, 1983 çулхи çуркунне те призывран юлмалла пулса тухать. Чăн арçыннăн çарта пулмаллах тенипе хĕç-пăшалланнă В. Максимов 1982 çулхи кĕркунне салтак ретне тăраймасан, ДОСААФ автошкулĕ урлă водитель правине алла илет, çара специальноçпа кайма хатĕрленет. Мирлĕ вăхăтра вĕренни вăрçă вут-çулăмне кĕрсен ăна пĕрре мар кирлĕ пулать, пурнăçне те çăлса хăварать.



Саланг перевалĕнчен тухнă хыççăн туслăх çирĕпленет кăна.

1983 çулхи кĕркунне, салтак кайма ят тухсан, шăпа тени ăна Туркменинчи вĕрентӳ пунктне илсе çитерет, Муркаш каччи икĕ уйăха тăсăлнă карантинра БТР водительне вĕренсе çар специальноçне алла илет.

– Эпир çара кайнă чух Афганистан пирки калаçсах та каймастчĕç. Унта вăрçă пынă пирки кăшт кăна пĕлеттĕмĕр. Анчах хамăр мирлĕ вăхăтра ӳснĕрен пире вăрçă питĕ хăрушшăн туйăнмастчĕ. Çавăнпа та карантинри сержантсем пире Афганистан валли хатĕрлени çинчен калани те шиклентерсех каймастчĕ. Хамăр вара Афганистан чиккинчен 200 километрта тăраттăмăр. Атте, хăй салтак пулнăран-тăр, пирĕн часть Туркестанри Хĕрлĕ ялавлă çар округне кĕнине тата Афганистан Республикинчи çар чаçĕсем çак округа пăхăннине пĕлсе, тăтăшах пире Афгана ямĕç-ши тесе ыйтса çыратчĕ. Хамăр патăмăрти сăмах-юмаха эпир килтисене пĕлтермен. Пире вара чăнласах вăрçă ĕçне хăнăхтаратчĕç. Хам бронетранспортер водительне вĕреннĕрен çапăçу вăхăтĕнчи лару-тăрура харпăр-хăйне мĕнле тытмаллине лайăх астуса юлма тăрăшаттăм, – аса илет чĕрĕк ĕмĕр каяллахине ултă çул Е.Андреев яч. хис. хуçалăх урлă районти 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕнче пушарнăйра служба тăсакан воин-интернационалист.

Салтак пурнăçĕ – Тăван çĕршыв сыхлавне панă кунсем – приказпа çыхăннă. Çĕршыв умĕнче тупа туни приказа пĕр сăмахсăр пурнăçлама ыйтать. Пĕрремĕш приказ – çарти вĕренĕве вĕçленĕ хыççăн Валера служба тăракан çар чаçĕн гражданла самолетпа интернационаллă тивĕçе пурнăçлама Афганистан Республикин тĕп хулине Кабула вĕçмелле. 22 уйăх иртнерĕ пирĕн ентеш кӳршĕллĕ çĕршывра çар тивĕçне пурнăçласа, сăрт-ту хушăкĕсенче вилĕм сапса ларакан душмансен хирĕçтăрăвне путлантарса. Салтак кайма ят тухнăранпа шăп та лăп çулталăк çитнĕ кун (сентябрĕн 30-мĕшĕ) БТРсен колоннипе Кабулран черетлĕ çар заданине кайма тухсан душмансен вут-çулăмĕ айне лекни Валерăн асĕнчен нихăçан та тухмĕ: чипер пыракан колонна çине сăрт-ту çинчен сасартăк асар-писер вут-çулăм йăтăнса анчĕ. Снарядсем çул хĕрринче те, колонна варринче те, хыçалта-малта та çурăлма пуçларĕç. Кам çӳлте – çав вăйлăрах, тени тӳрре килчĕ. Акă, гранатометран кăларса янă пĕр граната Валера тытса пыракан БТРа та лекрĕ, пĕр двигатель стройран тухрĕ. Мĕн тумалла? Çакăнта кирлĕ пулчĕ те ĕнтĕ вĕренни. Валера мĕн-пур пĕлӳпе ăсталăха пĕр çĕре пухса БТРа хăрушлăхсăр вырăна кăларчĕ, рота командирĕн управлени пункчĕ çухатусемсĕрех сыхланса юлчĕ. Çак паттăрлăхшăн Валера кăкăрĕ çинче "За боевые заслуги" медаль вырăн тупрĕ.

– Вăрçă вăрçах вăл. Анчах киле янă çырусенче "пурте йĕркеллĕ, лайăх пурăнатпăр" тенисĕр пуçне нимĕн те çырмасттăмăр, мĕншĕн килтисене кулянтарас? – ыйтуллăн каларĕ Валера çамрăклăхри вăрттăнлăха уçас мар тенĕ пек.

Вăрттăнлăх тесе калама кăна çăмăл. Сăрт-ту хушăкĕсемпе çар операцине пурнăçлама виçĕ талăкра 5 километр çӳлелле хăпарни, юр çинче тата чулсем хушшинче çурăмпа çурăм перĕнсе çывăрни, сывлăш çитменнипе аптăрани тата операцие вĕçлесен çавăнтан пĕр талăкрах каялла анни – çамрăксем 19 çултах çĕршыв хăйсене шаннине тӳрре кăларма пултарнине çирĕплетекен тĕслĕхсем.



В. Максимов паян Е.Андреев яч. хис. хуçалăх урлă районти 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕнче хуралта тăрать.

1985 çулхи юпа уйăхĕн вĕçĕнче Валера служба тивĕçне вĕçлесе тăван яла таврăнать. "Анне мана курсан "кĕтсе çитерейместĕп пуль, çĕрĕпе ыйхă килми пулчĕ", тесе кĕтсе илни пирĕн хамăр пурăннă чух аннесене ытларах хисеплеме ыйтни пулчĕ тесе шутлатăп", – вĕçлерĕ хăй калаçăвне паян пушар хуралĕнче тăракан Валерий Геннадьевич Максимов пушарнăй.

Хам пĕлнĕ тăрăх, Валера пушар хуралĕнче ĕçлет пулсан та, çулленех тăван хуçалăхра çур акире тырă акать, утă çулать, кĕрхи ĕçсене хутшăнать. 19 çулта вăрçă вутне хирĕç тăнăскер, паян та "хĕрлĕ автана" çăварлăхлассине хăйĕн пирвайхи тивĕçĕ тесе йышăнать. Пурнăç çулĕнче мăшăрĕ Елена тата икĕ хĕрĕ хăйне ăнланнине пысăк тĕкĕ тесе шутлать.

... Çулсем иртеççĕ пулсан та, ыйхăра Саланг перевалĕ тата ун витĕр кашни тухмассерен водительсем автомашина кантăкĕсем çине çăлтăрсем лартни, çапăçусенче юлташсене çухатни куç умĕнчен каймасть...

**Анатолий БЕЛОВ.**